Прокуратура ĕçченĕ сăмах илет

# Ӳсĕр çынна тинĕс те чĕркуççи чухлĕ çеç

Эрех ырри патне çитерменни пирки кашниех пĕлетпĕр, анчах çак чăнлăха нумай чух пулса-иртсен çеç аса илетпĕр. Ку чухне вара чавса çывăх та çыртма çук. Эпĕ малалла каласа паракан преступлени историйĕ те шăпах çак çул-йĕрпе аталаннă. Ытларах эрех ĕçни, карланкăна хĕртнĕ хыççăн кăкăр çапма тăрăшни саккуна пăснипе, çынсен куççулĕпе вĕçленнĕ.

## 7 метр тарăнăшри çырмара

Октябрĕн 7-мĕшĕнче район прокуратурине Шупашкарта пурăнакан арçын хăйĕн ашшĕне шырани пирки пĕлтерчĕ. Пĕрремĕш паллă: вăл эрне каялла çухалнă. Пĕлтерӳ илсенех прокуратура ĕçченĕсен тата районти шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕсен пĕтĕм вăйне çухалнă çынна шырама мобилизацилерĕмĕр. Çын улăм уринчи йĕп мар, тепĕр кун ирхине оперативлă ĕçсем пĕрремĕш ăнăçу кӳчĕç: Ильинка сали çывăхĕнчен 400 метрти 7 метр тарăнăш çырмара çухалнă çын кĕлеткине тупрăмăр: тумтирĕн пĕр пайĕ çук кĕлеткене брезентпа чĕркенĕ, аллисемпе урисене синтетика хăйăвĕпе çыхса лартнă. Тупнă кĕлеткене Всеволод Можаев медэкспертпа пăхса тухнă хыççăн пуç çинче пуклак япалапа çапнă хыççăн пусăрăнса юлнă нумай сурансем куç умне тухрĕç. Эксперт палăртнă тăрăх сурансем – мăлатук е пуртă хăварнă йĕрсем. Çакă тата эксперт çын хăçан вилнине палăртни следстви органĕсене преступнике шырамалли çул çине тăратрĕç. Районти шалти ĕçсен пайĕпе прокуратура ĕçченĕсен килĕшӳллĕ ĕçĕпе çав кунах преступник камне палăртма тата ăна тытса чарма май килчĕ. Преступник пĕр турткаланса тăмасăр хăй тунă преступлени пирки каласа пачĕ, хăй ирĕкĕпех преступлени хĕçпăшалне тупса пачĕ.

## Мĕн пулса иртнĕ-ха?

2006 çулхи августăн 25-мĕшĕнче А-па К . Ильинкăна килсе çитнĕ те Шупашкарти пĕр фирмăра ĕçлекен Ю. патĕнче сарай тăвас ĕçе кӳлĕннĕ. Пĕр эрне пек пурăнсан А. Б-па паллашать те вĕсем К-па ун патĕнче пурăнма пуçлаççĕ, пĕрлех эрех ĕçеççĕ. Пĕр-ик кунтан А. тата З-па паллашать. З. дачникăн дача çурчĕ Б. хуçалăхĕнчен тăвалларах урам урлă пулнă. З. гражданин Б-па А. пекех пулă тытса пурăннă. Паллашу хыççăн вĕсем пĕрре мар пĕрле эрех те ĕçнĕ. Эрехпе минресен З-ăн мухтанас, хăйне мăнна хурас йăла пулнă. Çак калаçусенчен А. хăйсем К-па иккĕшĕ кунта ют çынсем пулнине тата ют çĕрте пулă тытнине, çакă З-на килĕшменнине ăнланнă. З. хăй шухăшне уççăнах пĕлтермен тата çакна валли хăнасем те сăлтав паман.

Шăмат кун, сентябрĕн 30-мĕшĕнче, А., К. тата Б. Ю. хуçалăхĕнчи мунчара пулнă. Кăнтăр апачĕ хыççăн вĕсем патне З. пынă. Пуçтарăннă ушкăн çумра пулнă 0,75 литрлă водка кĕленчине пушатсан З. вĕсенчен уйрăлса кайнă. Кăштахран Б. та айккалла кайсан, А-па К. çывăрма выртаççĕ. А. 16-мĕш сехетре вăранса каять те Б. патне пулла каясси пирки канашлама тесе каять. Б. пӳртне кĕрсен А. кил хуçи диван çинче çывăрнине курать, ăна вăратса пулла каяссипе каяс марри пирки интересленет, анчах ӳсĕр Б. пулла ыран тин каясси пирки мăкăртатсан, хăна зала кайса телевизор ярать те хăйне валли чей хатĕрлесе чей ĕçме ларать.

16 сехет те 30 минут тĕлĕнче Б. пӳртне ӳсĕр З. пырса кĕрет, А. патне пырать те кăмăлсăр сасăпа хăна кунта мĕн ĕçленипе кăсăкланать. Ăна-кăна шутламан А. пулла каясси пирки интересленме килнине пĕлтерет. З-на çакă килĕшмест, вăл А-на кунта ют çын пулни пирки, хăй вара атаман пулни çинчен çĕкленӳллĕ сăмахсемпе пĕлтерет те хăй кунта йĕрке тăвссине систерсе пӳртрен тухать...

Тепĕр 10 минутран А. хăйĕн патне хыçалтан такам пырса малтан тутаран, хыççăн пуçăн сулахай енчен вăйлăн çапнипе ĕнтĕркенĕ çĕртен вăранса каять, анчах тăн çухатмасть. Тепĕр самантран вăл ура çине тăрса çаврăнать те З. сылтăм алăра 15 сантиметр тăршшĕ тата 5 сантиметр сарлакăш тимĕр тытса хăй çине хăмсарма тăнине асăрхать. Вăр-вартарах пулса А. тапăнаканăн сылтăм аллине тытса пăрса лартать, хăйне чышкăпа 2-3 хут питрен çапса пушă диван çине ӳкерет. З. хăйне вĕлерме шутланă тесе А. З-на диван çинчен урайне туртса антарать те ată тăхăннă урапа 3-4 хутчен кăкăр шăмминчен вăйлăн тапать. Тапнă вăхăтрах А. инкек тӳсекенĕн аяк пĕрчисем хуçăлнине туять. З. вара лару-тăру çакнашкал çаврăнса тухнине пăхмасăрах А-на хăратма пăрахмасть, ăна тĕп тăвас кăмăл пуррине пĕлтерсе урайĕнчен çĕкленсе илсе пушă кĕленчесем ларакан сĕтел еннелле туртăнать. З. алла кĕленче е çĕçĕ илсе хăйĕн пурнăçĕшĕн хăрушлăх кăларса тăратать тесе А. сĕтелпе юнашар вырнаçтарнă çăкăр касмалли пĕчĕк тумбочка çинче пĕр 35 сантиметр тăршшĕ мăлатук выртнине курса ăна хăвăрт алла илсе З-на тумтиртен тытса хăй енне çавăрать те мăлатукпа пуçран çапать. З. урайне çурăм çине ӳкет, анчах лăпланайман А. ăна татах 2–3 хутчен мăлатукпа пуçран çапать. З. халтан кайса пĕтĕмĕшлех “лăпалать”. З-ăн тата хăйĕн тутинчен тухнă юнпа вараланнă тумтирлĕ А., З., вилсе кайнине ăнланса илсе, ăна Б. хуçалăхĕнчи мунча хыçне туртса кайса хурать те Ю. хуçалăхне таврăнать. Ку вăхăта К. урăлса çитнĕ ĕнтĕ. Вăл юлташĕн тумтирĕ мĕнле юнпа вараланни пирки интересленсен, А. ăна З. пуçарнă çапăçура хăй З-на мăлатукпа пуçран çапса вĕлерни пирки каласа парать те çийĕнчи тумтире хывмасăрах мунча урайне çывăрма выртать.

Вырсарни кун ирлесе вăраннă А. мунчарах çăвăнса çĕнĕ тумтир тăхăнать те юнпа вараланнă тумтире пакета пуçтарса хурса ăна Б. хуçалăхне йăтса каять. Ĕнер пуçран хытă çапнăран пуç çурăлса тухас пек ыратать. Б. хуçалăхне çитсен хайхискер лаçри кăмакара вут чĕртет те вараланчăк тумтире унта çунтарса ярать. Хыççăн ĕнерхи çапăçуран юлнă йĕрсене пĕтерме урайĕнчи юна тап-таса çуса тасатать. Урай çунă мунчала та лаç кăмакинче хăйне валли вырăн тупать. З-на пуçран вилмеллех çапнă мăлатука А. кил хушшине илсе тухса, кайран çуса тасатма тесе, шыв каткине исленме хурать. Хăй вара пахчана тухса мунча хыçне пырса З. кĕлеткине сарайне туртса кĕрсе утă çине хурать те киле тухса каять. Тепĕр кунхине, октябрĕн 2-мĕшĕнче, 22 сехетре А. Ю. хуçалăхĕнчи сарайĕнчен брезент татăкĕ илсе Б. хуçалăхне таврăнать. Малтанах каткари мăлатука кăларса Б. хуçалăхĕнчи гаражри тимĕр шăвăççем хыçне перет. Гаражрах хура тĕслĕ вăрăм синтетика хăйăвĕ тупать. Ăна илсе пахчана тухса сарайне кĕрет, З. кĕлеткин алли-урисене тупнă хăйюпа çыхса лартнă хыççăн кĕлеткене брезентпа чĕркесе тула туртса кăларать, пахчаран тухмалли алăка уçса чĕркери кĕлеткене утма çулпа çывăхри çырма енне туртса каять. Çул çинче сĕтĕрĕнсе пыракан кĕлеткерен йĕмпе атăсем хăвăнса юлсан, вĕсене çул хĕрринчи тĕмсем хушшине персе пытарса хăварать. Вар хĕррине çитсен кĕлеткене вар тĕпне илсе антарса тĕрлĕ ăпăр-тапăр тăкнă çĕре кайса брезентпа витсе хурать. Вар хушшинчен хăпарсан тĕрлĕ каяш тултарнă михĕне виле выртнă тĕле перет. “Ĕç” тунă хыççăн Ю., килне таврăннăскер, хăйĕн патне милици тата прокуратура ĕçченĕсем пырса тухиччен те канăç тупаймасть, анчах...

## Паян

Хальхи вăхăтра преступнике арестленĕ, ун тĕлĕшпе уголовнăй ĕç пуçарнă. Преступление тĕплĕн уçса пама палăрăмлă экспертизăсем ирттерме пăхаççĕ. Çапла çав, саккуна пăссан, ăна темĕнле тĕплĕ пытарас тесен те, айăп таса шыв çине тухатех.

**М. ТАРАСОВ,**
**район прокуратурин аслă следователĕ.**

Илларион Владимирович
АЛЕКСЕЕВ



2006 çулхи чӳк уйăхĕнче, 78 çула кайса, Илларион Владимирович Алексеев пурнăçран уйрăлчĕ.

Илларион Владимирович Алексеев 1929 çулхи пуш уйăхĕн 15-мĕшĕнче Муркаш районĕнчи Вомпăкасси ялĕнче çуралнă.

Хăйĕн ĕç-хĕлне И.В. Алексеев Чкалов ячĕпе хисепленекен хуçалăхра пуçланă. 1943 çултан пуçласа 1946 çулччен асăннă хуçалăхра рабочи пулса ĕçленĕ.

1949 – 1953 çулсенче Совет Çарĕнче пулнă.

1946 – 1989 çулсенче Илларион Владимирович Мăн Сĕнтĕрти пир-авăр фабрикинче тата кирпĕч заводĕнче директор пулса вăй хунă.

Унăн хастар ĕçĕ-хĕлĕ продукци пахалăхĕпе калăпăшне ӳстерме, производство планĕсене ăнăçлă пурнăçлама май панă. Шанса панă ĕçе тӳрĕ кăмăлпа пурнăçланăшăн 1988 çулта Илларион Владимирович “Чăваш АССР промышленноçĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ” ята тивĕçнĕ. 1957, 1974 çулсенче ăна “Хисеп палли” орденпа, 1957 çулта Чăваш АССРĕн Аслă Канашĕн Президиумĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

Илларион Владимировича пĕлекенсем пурте вăл хăйĕн ĕçĕнче пысăк профессионал пулнине, пултаруллă ĕçленине, хăйĕнчен тата ĕçтешĕсенчен çирĕп ыйтнине, çынсен нуши-тертне ăнланнине, ыйтăвĕсене татса пама пулăшнине палăртаççĕ.

Илларион Владимирович Алексеевăн – пултаруллă ертӳçĕн, лайăх çыннăн çутă сăнарĕ пирĕн чĕрере яланах упранĕ.

**Ю.А. Иванов, А.Н. Иванов, В.Г. Никитин, В.С. Краснов, В.М. Рубцов, М.В. Виноградова, В.А. Храмов.**

Шкулсенчен хыпарлаççĕ

# Пушкин музейĕнче

Нумаях пулмасть Атапай шкулĕнче вĕренекенсем Чулхула облаçĕнче вырнаçнă Болдино ялне экскурсие кайса килчĕç. Çакăнта килнĕ те ĕнтĕ сентябрĕн 3-мĕшĕнче 1830 çулта вырăссен паллă поэчĕ Александр Сергеевич Пушкин. Халĕ кунта ăна халалласа музей уçнă.

Мĕн кăна курмарăмăр пулĕ эпир кунта! Малтанах Уçпени Турă Амăшĕн чиркĕвне куртăмăр. Пушкин пурăннă çуртра, вăл ĕçленĕ пӳлĕмре пултăмăр, вăл ларнă сĕтеле, вăл усă курнă чернил кĕленчине тата ыттине те куртăмăр.

Стенасем çинче вара паллă поэтăн амăшĕн Мария Алексеевнан, Ибрагим Ганнибалăн сăн ӳкерчĕкĕсем пулчĕç.

Пушкин уçăлса çӳренĕ вырăнсенче те пултăмăр. Вăл каçса çӳренĕ кĕпер урлă та пĕрре мар каçса пăхрăмăр. Кунтах мунча, лаша вити, çуна сарайĕ, чухăнсем пурăннă çурт, юмах керменĕсем пур.

Пире уйрăмах 19-мĕш ĕмĕрте тăхăннă çипуççем питĕ килĕшрĕç. Эпир те çав çипуççене тăхăнса сăн ӳкерттертĕмĕр.

А.С. Пушкин палăкĕ умĕнче те пурте пĕрле тăрса сăн ӳкерĕнтĕмĕр. Скульпторĕ Олег Комов пулнă.

Экскурси пире питĕ килĕшрĕ. Эпир хамăр учительсене А.Н. Ивановăна, О.Н. Петровăна тата автобус водительне В.Н. Куликова тав сăмахĕ калатпăр.

**Елена БЛИНОВА, 7 класс.**

Çырăнтару – 2007

# “Хыпар” – чăваш халăхĕн тĕкĕрĕ

Раççейри вырăс мар халăхсен чи вată хаçачĕ “Хыпар” тĕнчери, çĕршыври, республикăри, районсенчи мĕн пур пулăма вăхăтра çутатма ăнтăлать. Тĕрлĕ хыпара радио-телекуравпа та итлеме пулать, анчах хаçатри – ĕмĕрлĕх, чуна, кăмăла çывăхрах. Эпир Н.В. Никольский профессорăн “хаçат тăрăх ырра вĕренесчĕ” текен шухăша нихăçан та манмастпăр. ЫРĂ вăл – чĕлхемĕре, культурăна сыхласа хăварма, аталантарма чĕнни те, хресченĕн, ялхулари ытти çынсен çăмăл мар пурнăçне лайăхлатма, çитменлĕхсене пĕтерме пулăшни те. Информаци уйĕнче паян çĕр-çĕр хаçат-журнал: почта уйрăмĕсенче, “Чăваш пичечĕн” киоскĕсенче, лавккасенче, урамсенче, пасарсенче, автобус-троллейбусра тата ытти çĕрте чăвашла кăларăмсем, çав шутра “Хыпар”, шел те, çукпа пĕрех. Вырăсла тата чăвашла лайăх пĕлекен çынсем ытларах вырăсла хаçат-журнала суйласа илеççĕ. Телее, чăваш ялĕ хальлĕхе тăван чĕлхерен писмен-ха. Анчах çамрăк ăру çăмăлттай хаçатсене вулать е пачах вуламасть. “Вулакан ăру” çыннисем сахаллансах пыраççĕ. “Хыпара” тĕрлĕ тĕспе кăларса тăрсан унăн сăнсăпачĕ хитреленĕччĕ – анчах укçа çитмест. Ку енĕпе эпир пирĕн вулакансем пекех. Вĕсен пысăк йышĕ (ятарлă ыйтăм пĕтĕмлетĕвĕ тăрăх) “Хыпар” хаçатăн çырăнтару хакĕ пысăккишĕн ӳпкелешет. **Çав вăхăтрах 320 тенкĕ те 22 пусран 96 тенки çеç редакцие пырса кĕрет, 224 тенкĕ те 22 пусне почта тытса юлать.** Хаçата çырăнтарас ĕçре почта пулăшăвĕпе кăна усă кураятпăр. Альтернативлă почта йĕркелеме миллион-миллион тенкĕ кирлĕ.

Халĕ тата çырăнтару хакĕсене Мускавра çирĕплетеççĕ. Хаксене йӳнетес пирки монополиста тавлашса çĕнтерейместĕн.

320 тенкĕ те 22 пус: çур çулти 125 номертен кашни 2 тенкĕ те 56 пуса кайса ларать. Чун апачĕшĕн ку хаклă теме чĕлхем те çаврăнмасть. Анчах... “Хыпарăн” та, чăвашла ытти хаçат-журналăн та тиражĕсем юлашки çулсенче палăрмаллах чакрĕç.

**Халăхăмăр хăйĕн культурине (анлă пĕлтерĕшпе) сыхласа хăварма, аталантарма ăнтăлнин тĕп кăтартăвĕсенчен пĕри – чăвашла вулани, çав шутра “Хыпара” çырăнса илни те.** Эппин, хамăр чăвашлăх патриочĕ пулнине çирĕплетесчĕ.

2007 çулăн 1 çурри валли “Хыпар” ИÇ кăлараса тăракан хаçатсемпе журналсенчен 3-шне (пĕри “Хыпар” пулмалла) çырăнакансен хушшинче лотерея ирттеретпĕр. Парнесем: телевизор, микрохумлă кăмака, музыка центрĕ, радиоприемник, кĕнекесен пуххисем, 2007 çулăн 2 çурри валли тӳлевсĕр çырăнтару т.ыт. Паллах, лотерейăна хăшĕ-пĕри вулакансене илĕртни тесе те хаклĕ. Çав хушăрах ку – вулакансене хавхалантарни те. Вĕсем вара çакна тивĕçех. “Хыпара” нумай çул пĕр сиктерми çырăнса илекен те, тем сăлтавпа ăна урăх хаçатпа ылмаштарса тепĕр хут çырăнма пуçлакан та, унпа халĕ çеç туслашакан та. Эппин, тăванăмăрсем, почтальонпа тĕл пулма васкăр, май пулсан, “Чăваш пичечĕн” киоскĕсенче çырăнăр.

**А. ЛЕОНТЬЕВ,**
**“Хыпар” Издательство çурчĕн генеральнăй директорĕ-тĕп редакторĕ.**

Вулакан пултарулăхĕ

# Такмаксем

Янăра-ха, купăс, уççăн,
Çĕклентер ман чунăма,
Çут хĕвелĕм – хăмăр куçăм,
Юрласам эс манпала.

Такмакла, савни, хавассăн
Колхозри ĕççем çинчен,
Ĕç ялан ăнса пырсассăн
Савăнар-и-ха пĕрле.

– Чăн та танк пекех ман трактор,-
Каппайланчĕ Петĕркке.
Ӳсĕр чух ĕнер çак трактор
Кайнă çырмана тӳнсе.

Ултă хут та авлансаччĕ
Тукасри кăтра Иван,
Пурпĕр хĕрĕхри çак «каччă»
Туй тăвать каллех паян.

– Ĕçлейместĕп, çук вăй-халăм,-
Тет Ваçли курсан пĕрмай,
Хайхине курать пур халăх –
Эрехне сыпать пĕрмай.

Бригадирпала туслашнă
Хусах арăм Марине,
Янттипе укçа çапасшăн
Хĕрхенмест вăл эрехне.

Миххипех укçа тăвасшăн
Аякра çӳрет Ванюк,
Таврăнчĕ киле мăнтарăн –
Çийĕнче кĕпи те çук.

**П. ИВАНОВСКИЙ.**
Кĕртекасси ялĕ.

Пĕлтерӳсем. Объявления

**Проводится набор работников в кредитный кооператив «АГРОКРЕДИТ». Требования: знание ПК, в/о, до 40 лет.**
**Обращаться по адресу: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 23. Тел.: 2-18-13. 2-4.**

**ООО «Универсал-Агро» г. Чебоксары предлагает:**
**- косилка КСФ 3,1 - 22500 руб;**
**- грабли конные КГ-1 - 18500 руб;**
**- запчасти ко всем тракторам и сельхозмашинам.**
**Тел.: (8352) 63-20-93, 63-50-05. 2-3.**

**Паянхи хаçат номерĕн 5-6 страницисенче пай çĕрĕсен хуçисен пĕлтерĕвĕсем заказ шучĕпе пичетленеççĕ.**
**Ял тăрăхĕсенче паллашмалла.**

Ярапайкасси ял тăрăхĕ Аслă Отечественнăй вăрçă инваличĕ

**Феди Николаевич**
**НИКОЛАЕВ**

вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

**ГУП ЧР “Моргаушский издательский дом”**
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.
**Директор-главный редактор**
**А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

**Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.**
**Печать офсетная, объем 1,0 п. листа. Тираж 3364.**
**Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».**
**Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 21.11.2006 г.**
**Заказ**
**Дежурный по номеру БЕЛОВ А.П.**
**ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.**

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан в типографии ГУП ”ИПК ”Чувашия”: 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.